Ч(Чув)
С51
334064чув

Анатолий СМОЛИН

# ÇАВРĂМ



Национальная библиотека ЧР
4-033406



кор

С(Чув)
С 51

Анатолий СМОЛИН

# ÇАВРĂМ

САВĂСЕМ

кр

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1991

ББК 84 Чув 7-5
С 51

ПРОВЕРЕНО
20 10

33406-чув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

**Смолин А. С.**

С 51 Çаврăм: Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991.— 63 с.

Хайĕн пĕрремĕш кĕнекинче çамрăк поэт Тăван çĕршыв, çамрăклăх, юрату çинчен çырать. Чăваш халăх кунçулĕ те кăсăклантарать **ăна.** Автор шухăша сăнарлă та витĕмлĕ калама тăрăшать, пурнăçа тĕпчевçĕ куçĕпе сăнать.

**ББК 84 Чув 7-5**

**С $\frac{4803710202-89}{М\ 136(03)-91}$ 56—91**

**ISBN 5—7670—0461—7**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1991 ç.

# ПУРĂНĂҪ ТУРТĂМĔ

* * *

Чăваш чĕлхи — эс ман тăван чĕлхем,
Ялан чунра ҫунса тăран хĕлхем.

Миҫе поэт ҫырман пуль сан ҫинчен,
Эс чăннипех калама ҫук чечен.

Вут-ҫулăм пек хăватлă та кăра,
Хĕмлентеретĕн манăн кăкăра.

Эс ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах,
Хĕрӳ те хӳхĕм хĕвелпе танах.

Чуна пырса тивет кашни сăмах...
Тавах, тăван чĕлхем сана, тавах.

## «ЧĂВАШСЕМ, ЧĂМĂРТАНĂР!»

*П. Хусанкай*

«Чăвашсем, чăмăртанăр!»— çак икĕ сăмах
Паян вăйлăрах янăрать уйрăмах.

Кунта усалли-япăххи çук пачах,
Çынсен пĕр-пĕрне туймалла тачăрах.

Тутар-и вăл, вырăс-и — пирĕн тăван,
Эпир никампа хирĕçме шутламан.

Қавар тăвасси те асра та пулман,
Чăваш туслăха кăмăллать авалтан.

Пĕр-пĕр пысăк ĕç каплансан ун умне,
Чăваш чăмăртаннă часрах нимене.

Çĕнтернĕ çапла туслă йыш хĕнлĕхе...
Паян та упрасчĕ, туссем, пĕрлĕхе.

Ан сӳнтĕрччĕ хĕмĕ çак ырă йăлан,
Апла чăмăртантăр пур халăх ялан.

## САМАНА

Пĕр хăватлă сăмах — с а м а н а —
Тухатлать, тыткăнлать халь мана.
Тыткăнлать хулана, салана,
Пур киле çутă пек саланать.

Самана — эсĕ çутă тĕллев.
Самана — эсĕ вăхăт таппи,
Ăнтăлу, çĕнелӳ, тĕрĕслев...
Самана — эсĕ пурнăç, эппин.

Уттуна айккинчен сăнама
Эп тасти инçетри хăна мар.
Савала, самана, сăввăма,
Çĕнĕлле ĕçлеме хăнăхтар.

Сан сăнна сăнлама, самана,
Тăрăшсах эп шыратăп сăмах...
Шанса пар ывăлна ялавна,
Эп санпа, самана, яланах.

## МАМАЙ ТӐПЕМӖ

Çанçурӑм сӑрлатса илет,
Карланкӑна капланчӗ темӗн.
Иртни йӑлтах аса килет,
Ума тухсан Мамай тӑпемӗ.

Мамай тӑпемӗ... Çакӑнта
Çӗрпе тӑпе пӗрлешнӗ мар-и!
Тӑпра та çуннӑ вырӑнтан
Совет çынни пӗр шит чакмарӗ.

...Утатӑп чул картлашкапа.
Чӗре тапать сиксе тухассӑн.
Пӗвеннӗ тейӗн хӗм юнпа —
Кашни чечек сывлать халь ассӑн.

Иртет умран пӗр ветеран,
Пит-куçӗнче çӗвви пит тарӑн.
Уксахласа утать аран,
Калаймӑн пурпӗрех: «Мӑнтарӑн».

Ав, пуш-пушах кӗпе çанни,
Хӑрах алли ытла паталлӑ...
Çук, пуç усман совет çынни,
Çӗнтерӗве туптанӑ танлӑн.

Хӑватлӑ Улӑп тӑпри пек
Тӑпем тӑрать тӗнче курмалӑх.
Салтак мухтавӗн шайӗпе
Ана виçет паян пур халӑх.

* * *

Каччӑ чунӗ хӑш чух пархатарлӑ:
Те пӗлес килнӗрен умрине,
Хӗрхенсе, тен, эп юмӑç пӑхтартӑм
Виç ачаллӑ чикан майрине.

Те чунтан вӑл каларӗ — пӗлместӗп,
Суеçтерчӗ-и, тен,— пурпӗрех:
«Аллӑра паллӑ çын пулӑн эсӗ,
Унччен пулӗ кӑштах хӗнтерех».

Ёненместӗп пачах тӗшмӗше эп.
Леккелетӗп хутран хӗнлӗхе.
Парӑнмастӑп ӑна, кӗрешетӗп.
Çывхаратӑп çапла хӗрӗхе.

Хӗрӳрех кунсерен чун кӑварӗ,
Ӑраскал тилхепи аллӑмра.
Леш майра тӗрӗсех, тен, каларӗ?—
Паллӑ пулӗ йӑлтах аллӑра.

* * *

Тиевре — ăпăр-тапăр,
Çул йĕрлет урапа.
Хыçĕнче шавлă тапăр,
Ав, пырать урампа.

Хупăнать кашни алăк,
Çăрасем килсерен.
Ма хăрать пирĕн халăх
Чикансем килесрен?

Ун чухне мĕн ăнланнă
Çиччĕри шăпăрлан.
Ăслисем пек пытаннă
Сăнама хушăкран.

Эх, илемлĕ пĕр лавĕ,
Илĕртет тур лаши.
Пур-ши унăн тăрлавĕ,
Эх, лартса каймĕ-ши?..

Уткалать тăпăр-тапăр
Çамрăкки те ватти.
Мĕн шырать-ши çак тапăр,
Ăçталла ун утти?

* * *

Телей тени мĕскер тени пулать?
Ӑна кашни хăй майлă ăнланать.

Пĕриншĕн пултăр пӳрт тулли тупра,
Тепри телей тупать юратура.

Пĕри хăй ырлăхне хурать тĕпе,
Тепри телейлĕ çын телейĕпе.

Телей куратăп эпĕ çынсенче,
Пĕрне-пĕри савса пулăшнинче,

Ачан йăл куллинче, ун уттинче...
Телейĕм манăн — тăнăç сут тĕнче.

Телей тени мĕскер тени пулать?
Ӑна кашни хăй майлă ăнланать.

Анчах та санăн телейӳ кайран
Çынна хур ан кăтарттăр ăнсăртран.

* * *

Ҫăвак хуппи уçăлсан,
Çумăр евĕр пыл çусан,
Телейӳ те пулĕ сан,
Пурнăн эсĕ ыр курса.

Упасарри çурăлсан,
Улăп-паттăр çуралсан,
Ăраскалу пулĕ сан,
Пурнăн эсĕ юп курса.

Телейӳ те пулĕ сан,
Пурнăн эсĕ юп курса,
Ҫăвак хуппи уçăлсан,
Упасарри çурăлсан.

* * *

Хĕсĕкрех иккен
Халь тăван кил-çурт.
Илĕртет ĕлккен
Инçетри мăн çул.

Пĕлес çук ăна,
Умăнти кунна:
Те телей сунать,
Те инкек кăна.

Этеме темме
Пӳрнĕ хур курма.
Ҫирлĕ мар йĕме,
Хурланма-тума.

Ватăлни каять,
Çамрăкки килет.
Çак шăпа-пая
Ķашнинех кĕрет.

Хĕн тивсен те, тем
Илĕртет инçет.
Пурпĕрех этем
Ыррине кĕтет.

Çавăнпах-и, тен,
Чĕтремест алли.
Çавăнпа этем
Пуринчен вăйли.

Савăнса-кулса
Эпир ÿсрĕмĕр.
Ырлăхне курса,
Хурлăх тÿсрĕмĕр.

Ķĕреçе çĕре
Ķасса кĕчĕ пуль.
Çывхарать черет...
Тăкăнать куççуль.

## ЧĂНЛĂХ

Истори манмасть вăл,—
Сÿнмест ас хĕлхемĕ,—
Сывлăмĕ пит ассăн,
Хаяррăн хÿхлемĕ.

Ват Троя та, Рим та
Пĕр тĕлсĕр çухалмĕç.
Çук, манăçмĕ ним те —
Йăлт паллă, ав, халĕ.

Истори вăл тĕссĕр,
Ķунпа, тен, пĕр танлă.
Умри çулĕ вĕçсĕр,
Ķаçалăкĕ анлă.

Ķашни карт-паллийĕ
Юлать этемре çеç.
Вăл чунсăр пулин те,
Черченкĕ те çепĕç.

Йăшкать паян кун та
Истори суранĕ.
Ķам айăплă уншăн?—
Этемлĕх тиранĕ!

Тискеррĕн, пĕр шелсĕр
Шар курнă пур халăх.
Çĕршерĕн, пиншерĕн
Хыпарсăр çухалнă.

Пĕр айăпсăр-нимсĕр
Тăшман ятне илтнĕ.
Путланнă леш ирсĕр,
Ун ĕмĕрĕ иртнĕ.

Çапах паян кун та
Çӳрет ĕмĕлкийĕ.
Шырать-ши вăл хунта
Е çăлăнăç ķирлĕ?

Вĕрет кассăн-кассăн
Ķунçулăн шух çилĕ.
Тен, Нестер Янкасшăн
Хӳхлет тăван килĕ?..

Истори вăл аслă,
Ун чăнлăхĕ тертлĕ.
Шанатпăр: пуласлăх
Тек килмĕ тӳнтерлĕ.

## ТӖРЛЕМЕС

Тӗрлемес эпопейӗ! Ҫам сарӗ,
Ҫам кӑтартӗ сан паттӑрлӑхна?

*П. Хусанкай*

Тӗрлемес, Тӗрлемес...
Ҫуйлӑ-ҫулӑмлӑ ҫул.
Хусанъен хӗрлемес,
Чан ҫапать чугун ҫул.

Те кӗрлет аслати,
Те кашлать ват вӑрман...
«Васпати, васпати...»—
Илтӗнет хушӑран.

Пӗри тытнӑ пуҫне.
Юн тумлать ҫӗр питне.
«Эх, ҫитесчӗ, анне,
Латвие, кил тӗлне.

Пурӑнасчӗ пӑртак,
Ҫиленсе ҫӗн кунпа...»
Тек чӗнмерӗ салтак,—
Хӗҫ хӗрелчӗ юнпа.

Алхасать ҫичӗ ют,
Аркатасшӑн йӑлтах.
Юланут, юланут...
Улмуҫҫиллӗ ялта...

...Халь кунта илтӗнмест
Урнӑ тупӑ сасси.
Тӗрлемес, Тӗрлемес,
Ҫитрӗ сан пуласси.

Çĕкленеççĕ çуртсем,
Çĕнĕлле халь йăлтах.
Çывăраç паттăрсем
Тăванла масарта.

## СĂХĂМ СĂМАХĔ

Эп халĕ ĕнтĕ ватă,
Тăлланчĕ уттăм ман.
Тахçанччĕ, астăватăп,
Пачах чăхăмламан.

Мана кăна кӳлетчĕç,
Тĕпризччĕ эп ялан.
Пичеврисемшĕн тертчĕ
Юртма манпа пĕр тан.

Мĕн чухлĕ чупă-тăрă
Курман эп, тупата.
«Ытла чалак та йăрă»,—
Калатчĕç ман ята.

Чи чăнкă тăвалла та
Чупаттăм сиккипе.
Сĕм каçсенче тăллатчĕ
Хуçа хăй еккипе.

Çу кунĕ çитнĕçемĕн,
Кĕрсессĕн акаран,
Хаваслă кĕвĕ-çемĕ
Каймастчĕ хăлхаран.

Акатуйсем иртетчĕç
Пит шавлă та кăра.
Ăмăртăва килетчĕç
Утсем пур тавраран.

Кулатчĕ харсăр каччă,
Телей пит-куçĕнче.
Чĕн чăпăркка вылятчĕ
Ман купарча çинче.

Çакатчĕç явлăк, сĕлкĕ
Мăя, мала тухсан.
Ун чух сап-сарă сĕлĕ
Каймастчĕ ман умран.

Эп халĕ ĕнтĕ вată,
Тăлли те маншăн мар.
Йăшсах пырать хăватăм,
Хуть тулхăр, хуть шăмар.

Юпах тиха манерлĕн
Чупасчĕ çаранта.
Аса илетĕп эрлĕн
Хаваслă вăхăта.

Хисепĕм çук пăртак та,
Эп мĕскĕн янавар.
Хутра халь хурçă трактор,
Мана кӳлесшĕн мар.

Эп хамшăн кулянмастăп,
Шеллетĕп тихама.
Шиклентерет пуласлăх,
Кам тăсĕ тăхăма?

* * *

«Малалла-ха пурнăç, малалла».

*П. Хусанкай*

Чечек евĕр çулсене
Вăхăт вăтăрать.
Ҫилчĕ тепĕр çуркунне —
Ҫитрĕм вăтăра.
Те нумай ку, те сахал?—
Тем каламалла...
Тамалман-ха вăй-хавал,
Пурнăç — малалла.
Ҫав-çавах асран-тĕсрен
Шухăшлатăн та:
Хĕрхенетĕн чĕререн
Иртнĕ вăхăта.
Ҫайрĕ пуль ĕмĕрлĕхе
Шух ачалăх ман.
Сулăнатăп хĕрĕхе
Ҫамрăклăхăмран.
Пурпĕрех-çке, тусăмсем,
Ҫилес кунăм шеп.
Ҫитĕнеççĕ ачамсем —
Ашшĕ пултăм эп.
Умăмра халь анлă çул —
Ҫитĕпĕр алла...
Кулянма сăлтавĕ çук,
Пурнăç — малалла.

* * *

Хуркайăксем, мĕн-ма эсир вĕçетĕр
Карталанса, карла-карла, кăнтăралла?
Çитес инçетĕр çав тери инçе-тĕр,
Çапах та ăнтăлатăр малалла.

Хуркайăксем, мĕн-ма эсир вĕçетĕр?
Çунатсемпе çухрăмсене çĕне-çĕне?
Таçти çĕре те çаврăнса çитетĕр,
Çитет-тĕр çул виçме çине-çине.

Хуркайăксем мана хурав памарĕç.
Салху сăнар тĕрленчĕ тӳпере.
Çапах та çутă шанăç сухалман-иç:
Хуркайăк çулĕ юлĕ ĕмĕре.

## ВĔРЕНӲРЕ

Мĕн иртенпех тăкать сив çумăр.
Ларатпăр нӳрĕ окопра.
Кӳтсе чĕтрет йĕпе çанçурăм,
Вĕри мунча каймасть асран.

Çĕкленчĕ кĕтнĕ çут ракета.
Атакăна чĕнет приказ.
Хыçра халь — метр хыççăн метр,
«Мунча кĕртет» противогаз.

Чупатпăр малаллах пĕр вĕçĕм.
Вĕри тара çăтать тăпра.
«Хăçан-ши пулĕ çулăн вĕçĕ?
Ларасчĕ нӳрĕ окопра».

33406-чув
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

## ТĂВАТШАР ЙĔРКЕН

* * *

Кирлех мар пуль ытла кăшкăрма,
Çĕнетӳ çиттипе витĕнме.
Хăнкăрма — яланах хăнкăрма,
Лекес марччĕ янрав витĕмне.

* * *

Нихăçан ан сăхлан эрехе —
Симĕс пуçлă çĕлен-сĕлĕхе:
Самант туйнă ултав-ĕреххет
Этеме пуçĕпех пĕтерет.

* * *

Халь сăвăç пьесăпа супать. Мĕн калăн:
Прозаик айкашать рифмăпала.
Пахалăхĕ?! Ан тарăх, вулаканăм:
Универсал — пайталлă япала.

* * *

Рифмăлакан йышланчĕ кутăруçăн.
Кашни тухасшăн сăвăça ку чух.
Издательство калинккине, тен, уçăн,
Поэзи алăкне уçма май çук.

* * *

Çирĕмре çырман-тăк çивĕч,
Вăтăрта çырсан вăтам,
Ситмĕлте ăсталăх çитмĕ,
Тек çырма сынран вăтан.

## ЙАПАЛТИНЕ

Юрав юрри юрла-юрла,
Вӑл Парнаса та парӑнтарӗ.
Тепри ӗҫлет тарла-тарла,
Ҫавах тивмест-ҫке пархатарӗ.

## ПӖР КРИТИКЕ

Талайӗ пур ун,
Таланӗ те ҫук мар.
Таланчӗ ҫеҫ —
Мӑн кӳсекпе чукмар

* * *

Эп авман-и ухӑ,
Эп пулман-и шухӑ,
Утланман-и вичкӗн
Урхамахсене?
Ман пулман-и ӗмӗт,
Ҫуралман-и шухӑш
Ярӑнса вӗҫмешкӗн
Ҫӑлтӑрсем енне?
Пулнӑ, пурте пулнӑ:
Савӑннӑ та кулнӑ,
Ҫынсенчен нихҫан та
Хыҫала юлман.
Халӗ тӑрса юлнӑ
Ҫитмӗл ҫич ыйтуллӑ
Пурнӑҫа хӑюллӑн
Хирӗҫ пӑхакан.

## САВӐНТАРТӐМ

(Шӳт)

Ман пӗр пӗлӗш, тӗл пулсан, ялан
Ыйтусем парса тӗпчет васкавлӑн:
— Мӗнлерех, тӑванӑм, пурӑнан?
Сывлӑху пирки тата мӗн калӑн?

— Лайӑх,— тетӗп,— сывӑ-ха, куран,
Сӑвӑсем хӗрсех ҫырма пуҫларӑм...
Темшӗн пӗлӗш улшӑнать сӑнран,
Ҫӑмӑлӗ сасартӑк хуҫӑлать ун.

Ак, тӗл пултӑм пӗлӗше каллех.
Ҫӑмӑлне-и унӑнне тек хуҫӑп?
— Пурнӑҫ япӑх,— терӗм юриех.
Кулӑпа ҫуталчӗ ун пит-куҫӗ!

* * *

Ман асатте ӗненнӗ Сталина,
Хрущев юлташ аттешӗн пулнӑ турӑ.
Эп Брежнева ӗненнӗ чунтанах —
Мана та витӗм кӳнӗ диктатура.

Ак ҫитӗнӗҫ те манӑн ачамсем,
Вӗсем ыйту памашкӑн пуҫлӗҫ ирӗк:
«Аттеҫӗм, каласам та пӗлтерсем,
Ҫама ӗненмелле-ши паян пирӗн?»

Мӗскер калас ун чух ман вӗсене?
(Политика енчен эп пулмӑп суккӑр):
— Ӗненӗр яланах ыр ҫынсене,
Тата чунӑрсене нихҫан ан сутӑр.

## ÇУЛ ЮППИНЧЕ

«Пĕрремĕш курсра вĕреннĕ
чухне пĕр критик çеçчĕ,
ыттисем — сăвăçсемччĕ,
Юлашки курсра пĕр поэт,
ыттисем — критиксем».

*(Студентсен калаçăвĕнчен)*

Пĕрремĕш курс. Ķашни поэтчĕ:
Епле иленмĕн илеме!
Ķашни хăй шăпине кĕтетчĕ,
Пачах пĕлмен критиклеме.

Ķашни малашлăхшăн çунатчĕ
Хавхаланса çул пуçĕнче.
Чăхăмламастчĕ çилçуначĕ,
Ытла кĕренччĕ çут тĕнче.

Ķайран, шух вăхăт иртнĕçемĕн,
Сайралчĕç сăвăç-лириксем:
Пĕриншĕн çулĕ пит инçе-мĕн,
Тепри юлайнă-мĕн ӳксе.

Ак çул юппи. Йыш — пĕчченленчĕ.
Тăратăп туссене кĕтсе.
Пĕрремĕш курс. Ķашни поэтчĕ.
Халь ытларахăш — критиксем.

# ИНТЕРНАЦИОНАЛ КĔПЕРĔ

(Публицистикăллă поэма сыпăкĕ)

*Паттăр интернационалиста*
*Николай СЕРОВА*
*халаллатăп.*

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе,
Кунçул уйне тухса, хĕвел тумтир тумланĕ,
Çĕн кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн кун çине, çĕн чечексем чĕртсе,
Интернационал кĕперĕ анĕ.

*Çеçпĕл Мишши*

Пурнатпăр мар-и хăтлă хваттерте,
(Кĕçех кашни çемье хваттерлĕ пулĕ.)
Пачах эпир курмастпăр çав терте,
Пире шиклентермест ылханлă пуля.

Эпир сенкер экран çинче кăна
Хутран-ситрен синкер вăрçа куратпăр.
Хаçат-журнал вулатпăр пĕр кана,
Пĕр шухăшсăр, пит канлĕн çывăратпăр.

Çапла ыйха путать пур ял-хула,
Пит тутлăн тĕлĕрет-тĕр анлă Атăл...
Кунта вара пачах та урăхла,
Кашни куна юлашки пек хаклатăн.

Кунта час-час пăшал сасси кĕрлет,
Пĕлеймĕн тепĕр чух: ăçтан кам перĕ?
Кунта совет çынни вута кĕрет —
Хывать Интернационал кĕперĕ.

Афганистан... Тухмастăн эс асран,
Çынсем паян сана шанса сăнаççĕ.
Афганистан... эс чĕрери суран,
Пĕр чарăнми йăшкатăн ирĕн-каçăн.

...Афганистан. Пăлхавăр. Пăтрашу.
Ту хыçĕнчен килет тăхланлă çумăр.
Тăвансене кирлех-тĕр пулăшу,
Авантарах — пулсассăн çума-çумăн.

Пĕр вĕçĕм Пакистан енчен шăвать
Тăшман çĕлен-калта пек илĕм-тилĕм.
Чарасчĕ хăвăртрах харкашăва,
Кирек хăçан та вăл хăрушă — вилĕм.

Пур халăха савас пулать чунтан.
Хитре тĕнче пăхать куçран, ыр суннăн.
Анчах эп мар, Серов каять унта,
Çапла тума чĕри хистенĕ унăн.

Хăй пурнăçĕ çинчен шутлать кашни.
Хăшĕ-пĕри вута кĕрет тăрлавлăн.
Çапах мĕскер вăл — паттăрлăх тени?
Тан евĕр шухăшпа тапать тăнлавăм.

* * *

«Коля шăллăм пĕлмен, пурнăçлайман ĕç çукчĕ. Чăннипех те алли ылтăнччĕ унăн. Асталăхĕ хăй тĕллĕн килмен, паллах. Тăрăшнă, урăхла майĕ те пулман. Атте, Василий Корнилович, шăллăм 3—4 уйăхра чухне çĕре кĕчĕ. Анне, Феодосия Софроновна, Коля пĕрремĕш класра чухне сарăмсăр вилчĕ. Иккĕн хăр-тăлăха юлтăмăр эпир. Асанне ура çине тăма пулăшрĕ пире. Ĕмĕр-ĕмĕр тав ăна».

*(Коля Серов аппăшĕ Любовь Васильевна Никифорова каласа панинчен.)*

Ытла ынатлӑ кӑмӑллӑ,
Ытла та хӑюҫах.
Ҫынна шанаттӑн ҫӑмӑллӑн,
Саваттӑн пурнӑҫа.

Шкула тухса чупаттӑн,
Хӗпӗртесе чунтан.
Е «пиллӗк», е «тӑваттӑ»
Илеттӗнччӗ ялан.

Киле килсен лараттӑн
Кӗнекесем тытса.
Хуткупӑсне калаттӑн
Епле хавхаланса.

Хӑвах ӗне сӑваттӑн,
Кӗтместӗн аппуна.
Е кӗпе-йӗм ҫӑваттӑн...
Пур ӗҫ — ал май сана.

Шанаттӑн, шӑллӑм, эсӗ
Хӑв ҫӑлтӑрна ялан.
Вӑл туйӑнман сӳнессӗн,
Ҫап-ҫутӑ пулнӑран.

Вӑл туйӑнман сӳнессӗн,
Ҫухалчӗ-ҫке тӑрук...
Ҫук, ҫук, эп ӗненместӗп,—
Сӳнмен сан ҫӑлтӑру.

* * *

«Уроксенче Коля ҫав тери тимлӗ итлетчӗ. Пӗр-пӗр темӑна ӑнлантарнӑ хыҫҫӑн ыйтусем паратчӗ. Чӑвашла кӗнекесем вулама кӑмӑллатчӗ. «Чӑвашӑн тӑван чӗлхипе культурине лайӑх пӗлмелле»,— тетчӗ вӑл. Сӑвӑсем вулама юрататчӗ, уйрӑмах — Ҫеҫпӗл Мишшипе Петӗр Хусанкая».

*(Крымсарайккӑ вӑтам шкулӗнче чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен Валентина Алексеевна Алексеева каласа панинчен.)*

«Хастарлă, хыт утăмлă пулăр»,—
Класра çирĕп сас янăрать.
«Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр...»—
Серов Коля сăвă калать.

Тăнлаççĕ ăна ним чĕнмесĕр
«Çĕршывăн хастар ачисем».
Çапла çитĕнет-тĕр çĕн несĕл,
Кашнин çут тĕллев, ĕмĕтсем.

Ăшра Çеçпĕле ăмсанаççĕ,
Çав вăхăт пирки сĕмленсе.
«Мĕскер эпир тунă хальхаççăн?»—
Тухаççĕ ума ыйтусем.

Асрах чи хастар çын Корчагин,
Гастелло тухмасть манăçа.
Мухтавлă Чапаевăн чапĕ
Хăвалĕ каллех канăçа.

Вĕçме ĕмĕтпе пит те лайăх,
Апла пулар мар-ха йăваш.
Чĕнет уçлăха Николаев —
Ентешĕмĕр, паттăр чăваш.

Чакма каялла халь юрать-и?—
«Эпир улăпсем йăхĕнчен...»
Класра çирĕп сас янăрать ав:
«Ан юлăр кунçул уттинчен!»

* * *

«Коля Серов ентешĕм хыççăн эпĕ те Фарьяб вилаятĕнчи (провинцийĕнчи) Маймене хулинче ДОМА (Афганистанри çамрăксен демократиллĕ организацийĕ) ыйтнипе çамрăк афганецсене çулталăк хушши çĕнĕлле

ĕçleme vĕrentrĕm. Коля пурăннă пÿлĕмре унăн кравачĕ çинчех выртса тăтăм. Яланах ырăпа кăна асăнатчĕç Николай Серов паттăр интернационалиста кунти çынсем».

*(Николай Михайлов интернационалист асаилĕвĕнчен.)*

Маймене хули Элĕкрен пысăкрах,
Тусем хушшине вăл вырнаçнă.
Анчах та пĕрпеклĕхĕ, чăн та, пурах,—
Çынсем курăнаççĕ мăнаçлăн.

Апрель революцийĕ панă тивлет
Темрен хаклăрах чухăнсемшĕн.
Ана пăшалпа сыхлама халь тивет:
Пĕртанлăх — хăрушă шахсемшĕн.

Таптасшăн вĕсем туслăха, пĕрлĕхе.
Ислам тĕнĕпе витĕнеççĕ.
Кăштах тĕттĕмрех хăшĕсем халлĕхе,
Аллах хăватне ĕненеççĕ.

Анчах Серов пек мушовер* пулăшсан,
Çынсем хăйсемех йăлт ăнланĕç.
Пыратчĕç çапла майĕпен улшăнса.
Серов хĕпĕртетчĕ: «Ку — ман ĕç».

Шамси, Хафиза, Мухаммед — райкомран,
Вĕсемшĕн ялан алăк уçă.
Çÿреççĕ пĕрмай вĕсем Коля таврa,
Серов — çамрăксен чăн çулпуçĕ.

Хăш чух ятлаçса та илетĕн кăштах,
Çавах кÿренмесĕр тăнлаççĕ.

---

* Мушовер *(афг.)* — советник.

«Дусты»*, «шурави»** илтĕнет час-часах,
Апла килĕшет халăх влаçĕ.

Пыратчĕç çапла майĕпен улшăнса,
Анчах тĕлĕрмен тăшмансем те.
Çĕлен-калта евĕр килетчĕç шуса,—
Усал та хура шухăшсемлĕ.

Кĕтмен-шутламанччĕ пачах та çынсем:
Сасартăк Серов аптăрарĕ.
Кĕтетчĕç ăна Чăвашра ачисем...
Тискер-çке тăшманăн каварĕ.

* * *

«Ман ачасем, Павликпа Таня, эп вĕсем валли нимĕн те хăварайманнине пĕлччĕр — ман укçа та, урăхла нимĕнле тупра та çук, анчах эпĕ вĕсем валли Тăван çĕршыва хăваратăп, ĕмĕте хăваратăп. Çакăншăн вара кĕрешмелле. Мăшăрăм Галя, ман юратнăскерĕм тата пĕртен-пĕрскерĕм, мана яланах ăнланнă, халĕ те ăнланĕ: эпир утса тухнă çул мĕне те пулин тăратех, тата вĕсен ашшĕпе упăшкишĕн — революци рядовойĕшĕн — урăх çул пулман».

*(Николай Серов дневникĕнчен.)*

Эп санран ним пытармарăм,
Саврăм мар-и чĕререн.
Ăш сăмах, тен, калаймарăм,
Уншăн эсĕ ан кӳрен.

Хуйăху питех те тарăн,
Епле пурăнăн пĕччен?

---

* **Дусты** *(афг.)*—туслăх.
** **Шурави** *(афг.)*—совет çынни.

Ан кулян хытах, мăнтарăн,—
Чун-чĕрӳ ытла черчен.

Умăнта ман юлчĕ парăм,
Татма çук тинех ăна.
Сывă пул, юратнă арăм,
Аса ил хăш чух мана.

Ик ачам ман — ик çунатăм,
Икĕ шанчăк, пин телей.
Эп сире чунтан саваттăм,
Илĕртетчĕ çут тĕллев.

Пухăнаттăмăр тăваттăн,
Ĕç пĕтсессĕн, каçсерен.
Утьăкка сире тăваттăм...
Мĕн парас ман халь сире?

Çук, пĕлмен тупра тĕлне эп,
Укçана савман чĕрем.
Çĕршыва сире пиллетĕп:
Чи хакли вăл тĕнчере.

Сывă пул, тăван ялйышăм.
Сывă пул, тăван аппам.
Çывăха ытла ан йышăн
Хурлăха. Çапла шăпам.

Маншăн эс анне пекехчĕ,
Йăлт пайлаттăмăр икке...
Инкеке пачах кĕтменччĕ,
Вăл хăех килет иккен.

Эс ан курăн мансăр тăлăх,
Сывă пул, Чуракасси.

Илĕртӳллĕ улăх тăрăх
Тек пулаймĕ чупасси.

Сывă пул, юратнă халăх.
Пĕтмĕн эсĕ нихăçан,
Ма тесессĕн харсăр халлă,
Ачусем те паттăр сан.

Çеçпĕле çуратнă халăх
Улăп йăхĕнчен, чăнах.
Ҫирлĕ мар мана мăн палăк,
Халăх сывă пултăрах.

Ĕçĕм çук ман мухтанмалăх,
Сан валли хăвармăп мул.
Сывă пул, юратнă халăх,
Савнă халăх, сывă пул!

Сывă пул, Тăван çĕршывăм.
Эс мана пит ан ятла:
Пурнăçра килсен те йывăр,
Эп ямарăм сан ятна.

Утма тăрăшрăм эп танлăн
Санпала, çĕршывăм, тан.
Çут тăванлăх та пĕртанлăх
Маншăн пулнă чăн малтан.

Çавăнпа чĕремçĕм манăн
Хушрĕ мар-и юлташла:
«Тăванла Афганистанăн
Халăхне пулăшмалла!»

Сывă-и, атте-аннеçĕм?
Ҫĕтсе илĕр ывăлна.

Парнесем сире валеçмĕп,
Çук, килмен эп хăнана.

Ытлашши ан хыпаланăр,
Ан пăлханăр кăлăхах.
Ачăрна эсир ăнланăр:
Килĕп эп вăхăтлăха.

Сывă-и, анне-аттеçĕм?
Вăрăм пулмĕ ман сăмах.
Çĕр çинче мана кĕтеççĕ,
Ман унта таврăнмаллах.

* * *

Пурăнăç туртăмĕн
Витĕмĕ пур та-мĕн:
Темĕн те куртăм эп —
Пурĕпĕр пурăнăп,
Мĕскĕннĕн курăнмăп.

Савнă сенкерлĕхĕн
Пулмĕ синкерлĕхĕ,
Хурлă текерлĕкĕн
Килмĕ тек эрлĕкĕ,
Юлĕ еткерлĕхĕм.

Савĕç-и, савмĕç-и
Е мана манĕç-и —
Сăвăç йăпанăçĕ —
Тăвăллă канăçăм —
Туйăнĕ савнăçăн.

## КУКАМАЙПА КАЛАҪНИ

Аллине кӗнчеле тытнă май
Қалаҫма кăмăллать кукамай.
— Қаласам,— тет,— мăнукăм, мана,
Мӗн сунать пире ҫӗн самана?
Мӗншӗн вутă хакланчӗ, ачам?
Мӗншӗн супăнь ҫухалчӗ пачах?
Ҫухалинччӗ ҫапла пур черет.
Мӗншӗн ҫӗр час-часах чӗтренет?
Юрламаҫҫӗ мӗн-ма тăрисем?
Е кӳренчӗҫ пире туррисем?
Вăрҫă-харҫă пӗтмест-шим татах?
Ма ҫынсем хаярланчӗҫ хытах?
Йӳнелмест-шим текех аш-какай?..
Йăлт пӗлесшӗн ман ват кукамай.
Хуравлатăп ăна эп патвар:
— Чăрмавсем, чăнахах та, ҫук мар.
Ҫăмăл мар ҫӗршыва халлӗхе,
Ҫӗнтеретпӗр ҫавах хӗнлӗхе!
— Ҫӗнтеретпӗр, мăнукăм, анчах
Хӗнлӗхне кам тăвать? Хамăрах.
Қӗрешӳ пулӗ ҫивӗч, кăра —
Ҫăмăл мар ҫӗнтерме хамăра.
Хальхи ҫамрăк тата пит мăран:
Ни турра ӗненмест, ни мура.
Ӗненӳсер вара нихăҫан
Нимӗнле пысăк ӗҫ ăнăҫман.
Қалаҫсассăн, сăмахӗ нумай,
Уншăнах тӳлес ҫук куланай...
Ытла ватă та ман кукамай,
Пӗтӗмпех ăнланать хăйне май.

* * *

«Сейсмограф пулмалла поэт чĕри...»
*П. Хусанкай*

Хĕл варринче çăва пуçларĕ çумăр,
Сив юр çапса çăвать çу кунĕнче.
Йăлт улшăнать: хуть макăр эс, хуть çухăр—
Арпашăнать-пăтрашăнать тĕнче.

Техникăна эп ачаран саваттăм,
Аслăлăха шанаттăм чун-вартан.
Анчах мĕскер тăвать-ха «мирлĕ атом»,
Килнех-ши вăл Чернобыль пур пулсан?

Имçам çинчен çыратчĕç сăвă-юрă,
Ырми-канми ырлатчĕç имçама.
Килнех-ши вăл, чĕрчун тӳссессĕн хурлăх?
Унран инкек патне те инçе мар.

ГЭС хăватне паян кунччен мухтатпăр,
Курма пĕлмесĕр ун тӳнтер енне.
Этем хăйне валли лартать-çке тапă,
Епле тата чăтать-ха Çĕр-анне?

Нефтьне, газне пĕр чарăнми уçлатпăр,
Шалтан шала кĕретпĕр çĕр ăшне.
Тен, çавăнпах вăл чĕтрене пуçларĕ,
Татах мĕн курмалла-ши малашне?

Çапах та эп пуласлăха шанатăп,
Ачамсене çапла пиллес килет:
Йăлт кирлĕ тĕнчере: усал шăна та...
Хĕвел ăшши кашни чуна çитет.

Хитре те аслă пирĕн çутçанталăк.
Ан кайтăрччĕ текех вăл тарама.
Пур ырлăхне вăл парĕ савăнмалăх...
Çук, кирлĕ мар ăна пăхăнтарма.

## КАЛА-ХА, МИСТЕР ДЖОН

«Çынсем хăш чух ытла тискер пулаççĕ»
— *О. Шухши*

Мĕн кирлĕ çынсене, мĕскер çитмест-ши,
Мĕн-ма вутпа выляççĕ ачалла?
Кама вăл кирлĕ çĕн ракета «Першинг»?
Кала-ха, мистер Джон, мана кала.

Е халăха каллех шар кăтартасшăн,
Вут тивертсе Европа варринче?
Е пĕтĕмпех пĕр ăçтиçук пуçтахшăн
Кĕлпе тусан тăвасшăн çынсенчен?

Çук, кирлĕ мар мире нейтрон йăх-яхĕ!
Этемлĕх хур курмашкăн çуралман,
Ан мăнтăр нихăçан çавна пуçтахĕ:
Пире те шур тăмран йăваламан.

Ăнланăр: уссăрах-çке тĕркешетĕр,
Истори çаврăнаймĕ каялла.
Сенкер тӳпе сире те килĕшет-тĕр?
Кала-ха, мистер Джон, мана кала.

* * *

Панеллĕ çĕнĕ çурт чӳречинчен
Пăхса ларать салхуллăн ватă карчăк.
Те çут куççуль юхать ун куçĕнчен,
Те йăлтăрать сӳнме пĕлмен çут шанчăк.

Ырми-канми ĕçленĕ-тĕр ялта,
Тен, халиччен алне тытман туя та.
Эп хам та ял ачи-çке, тупата,—
Ун тунсăхне чĕрempеле туятăп.

Сисетĕп, чунĕпе вăл ялĕнчех,
Хăйне курать кĕтӳ кĕртме тухассăн.
Анчах вучахĕ сӳннĕ килĕнче,
Çавăншăнах сывлать-тăр ассăн-ассăн.

Ĕмĕтĕнче вăл халĕ те ялтах,
Унти масар çинче мĕнпур тăванĕ.
Хула таврашĕ ют ăна йăлтах,
Анчах та ватлăхра мĕскер тăвайăн?

Панеллĕ çĕнĕ çурт чӳречинчен
Ăçта пăхан — унта тĕтре те тĕтĕм.
Ват карчăка хĕрхентĕм чĕререн,
Сисмесĕрех унпа пĕрле эп йĕтĕм.

* * *

Кĕр кунĕнче, карла-карла, кăнтăралла
Картин-картин вĕçеççĕ кайăксем:
«Кайри мала, хуркайăксем, кайри мала!»—
Чупаттăмăр эпир, шăпăрлансем.

«Кайри мала» тенин пĕлтерĕшне-тĕшне
Ун чух, паллах, ним чухлĕ ăнланман.
Анчах туйнах-тăр сăмахсен асамлăхне,
Вăл куçнă çавăнпа ламран лама.

«Кайри мала!»— кăштах хыçа юлать ват хур,
Çамрăкраххи тухать ун вырăнне.
Çапла чакать, чакать умри мĕнпур хĕн-хур,—
Тăсаççĕ кайăксем хăйсен çулне.

Этемлĕх те çавах, пырать çав çул-йĕрпех,
Темле чăрмав пулсан та умĕнче,
Ана вăл пурпĕрех çĕнет-çĕнтеретех —
Кайри мала туртать паян кунччен.

Мĕнех, каллех килет кĕр кунĕ — каймалла.
Иртеççĕ çаплипех кунсем, çулсем.
-- Кайри мала, хуркайăксем, кайри мала!—
Чупаççĕ кăшкăрса шăпăрлансем.

* * *

Чăвашра вĕçтерет çил-тăман,
Ахăртнех, ахăрать шартлама.
Ҫунашкал пуласса шутламан.
Тĕлĕнтермĕш тухать ман ума.

Ҫеçкере чĕлтĕрти кĕлчечек,
Кипарис та ларать симĕсех.
Мандарин мĕн тери халь чечен...
Эп сăнатăп йăлтах тĕмсĕлсех.

Каштансем кăшт куштан пике пек,
Ҫимĕçне те тăкман-ха хурма.
Киленсе илĕртен илемпе
Ҫĕннине тăрăшатăп курма.

Темĕн те пĕр ӳсет кăнтăрта:
Олеандр, левкой, эвкалипт...
Туйăмсем капланаç кăнтăрта,
Мĕн кăна çук кунта куç валли!

Эп курсассăн çакна шутламан,
Хĕвел-кулă çиçет сăнăмра.
Чунăмра вара ман — çил-тăман,
Шартлатан шартлама — асăмра.

* * *

Эс мана, Пицунда,
Ырлăхна пит сун та,
Хăварас тĕллевлĕн пурпĕр ан астар.
Кирлĕ мар пин сум та,
Ма тесессĕн сумлăн
Йыхăрать юратнă хаклă Шупашкар.

Хура тинĕс урнăн
Хăвалать хум-хурлăх —
Çамрăк сăвăçпа вăл уйрăласшăн мар.
Кавказ тăвĕ урлă
Эп пулсан та — курăп
Сана çеç, шап-шурă шĕкĕр Шупашкар.

* * *

Вăрахчен, чунтанах тĕлĕнсе,
Эп сăнарăм Хура тинĕсе.
Хумханаççĕ хушка хумĕсем,
Ыр сунса калаçан: «Килĕрсем!»
Уруна перĕнеççĕ чăш! вашш!
Пур тавра янăрать пек: «Чăваш!»
Сĕм аваллăх тухать куç умне,
Эп куратăп хунсен кусăмне.
Шав килеççĕ таçтан катаран
Сăварсем Хасар тинĕс таран.
Учĕсем кукалеççĕ çĕре,
Инçете хыпăнаççĕ сĕре.
Чăнкăр-чăнкăр тăвать йĕвенсем,
Кĕçенеççĕ утсем чĕвенсе...
Вăрахчен, инçете тĕсесе,
Эп сăнатăп Хура тинĕсе.

* * *

Шурă пуçлă Қавказ,
Тухрăн эс ман ума.
Мĕн тери эп хавас
Санпала тĕл пулма.

Манăн мăн асаттем
Çакăнта пулнăран
Эс мана паян, тем,
Тăванрах курăнан.

Маншăн эс чĕрĕ пек,
Чун пурах пуль чулта.
Хăвăн мăн чĕрӳпе
Эс туятăн йăлтах.

Ахальтен-и хавас,
Эс чунтан ыр сунан.
Шур чалмаллă Қавказ,
Тухмăн ман асăмран.

* * *

Çӳлти хутра, библиотекăра,
Лараттăмăр çапла сĕтел тавра.
Курнатчĕ Хура тинĕс пит хитрен
Хĕвел шевлиллĕ çут чӳречерен.
Ларатчĕç лăпкăнах çуртсем, тусем...
Пуç çаврăнма пуçларĕ манăн тем.
Пăхатăп — эх, мĕскер ку, тамаша!—
Сĕтел-пукан яра парать ташша.
Стена çинчи ӳкерчĕк — ак, амак!—
Пуçларĕ каллĕ-маллĕ сулăнма.
Сехре хăппи — сехмет те эсремет —
Систерчĕ чĕреме: çĕр кисренет!
Вунвиççĕмĕш хутра эпир шăпах:
«Элчелĕм çитрĕ. Хурлă ман шăпам».
Кашнин сăн-пичĕ шурă хут пекех:
«Чăваш çĕрне кураймăп-ши текех?
Аттем-аннем сунман-шим пурăнма?..»
Ачамсене шеллетĕп, арăма.
Çынсем тапратрĕç алăк шырама,
Пуçларĕ ват хĕрарăм сăхсăхма,
Тути пăшăлтатать: «Тур çăлтăрах...»
Лăпланчĕ çутçанталăк тăруках.
Шутларăм эп, тăна кĕрсен, тинех:
Çĕр кисренет иккен хăй тĕллĕнех.
Хăй еккипе вăл çаврăнать, çапах
Ма кисретес ăна ракетăпах?

* * *

Ҫӑлтӑр тӳпере —
Пӑнчӑ.
Пӗчӗк купере
Пӑчӑ.
Темӗн чӗмери
Пулчӗ.
Хыпрӗ чӗремри
Вучӗ.
Шухӑш сан ҫинче,
Тусӑм.
Пусрӗ пур енчен
Тунсӑх.
Самаях лӑскать
Пуйӑс.
Сан патна васкать,
Туй эс.
Каймӑп купере
Урӑх.
Уйӑх тӳпере,
Уйӑх.

* * *

*Людмилăна*

Сана кĕтсе, чĕрем кӳтсе пăрланчĕ.
Эс килтĕн те — чĕрем каллех кăвар.
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех пĕрле пулсамччĕ,
Пĕччен мана нихçан та ан хăвар.

Çумра çук чух — ытла салху та тунсăх,
Хĕвел пăхать пек — юнашар чухне.
Санпа кăна пуласчĕ, савнă тусăм,
Нихçан çухатас марччĕ пĕр-пĕрне.

Эп сансăр ним тума та пултараймăп,
Эп сансăр тăлăх-туратпа пĕр тан.
Çапла савнишĕн ан тусамччĕ айăп.
Қаçар çапла савманшăн чăн малтан.

Сана кĕтсе чĕрем кӳтсе пăрлантăр.
Хĕрӳ чĕрӳ хăтарĕ сив пăртан.
Çак тĕнчере çав юратса курман-тăр,
Қам нихăçан çапла кĕтсе курман.

* * *

*Шăллăма, Валера Смолина*

Халиччен утманскер юрату çулĕпе,
Пиччене йĕкĕлтеттĕм хăш чух:
— Мĕншĕн эс çывăрмастăн, пиччем, çĕрĕпе?
Ун пек хĕр тĕнчере темĕн чул.

Çав каçсем çитрĕç мар-и хам куçăм умне,
Ентĕ шăллăм кулать халь пĕрмай:
— Мĕншĕн эс çывăрмастăн, пиччем, ирчченех?
Ун пек хĕр тĕнчере пит нумай.

## КĂВАЙТ

Чĕртрĕмĕр иккĕн кăвайт,
Çунтăр тесе çулăмпах.
Эс ĕненсе те шансах
Хушрăн сăмах:

Çунтăрччĕ пирĕн кăвайт,
Çунтăрччĕ çуттăн пĕрмай.
Эсĕ манса çеç ан кай:
Вăл çунмаллах.

Пылĕ юхать юмахра.
Пурнăç — пачах урăхла.
Тухрĕ темле пăтăрмах —
Çĕтрĕ сăмах:

Çунтăрччĕ пирĕн кăвайт,
Çунтăрччĕ çуттăн пĕрмай.
Эсĕ манса çеç ан кай:
Вăл çунмаллах.

Сӳннĕ кăвайт умĕнче
Эпĕ ларатăп пĕччен.
Сивĕннĕ кĕл ăшĕнче
Кăмрăк-сăмах:

Çунтăрччĕ пирĕн кăвайт,
Çунтăрччĕ çуттăн пĕрмай.
Эсĕ манса çеç ан кай:
Вăл çунмаллах.

## ЮРАТУ

(Шӳт)

Хĕрупраç кăвар-каварĕ
Çунтарать-çке чĕреме.
Йăл кулса савни каларĕ
Çăлтăрсем парнелеме.

Тĕлĕнтермĕш пысăк парăм
Анчĕ мар-и пуç çине.
Йăпăр-япăр эп хăпартăм
Хамăр аслăк тăррине.

Çăлтăрсем çунаççĕ çуттăн,
Илĕртсе хăйсем патне.
Хăвăрт турăм пысăк утăм —
Петĕм антăм çĕр çине.

Ахлатса кăна выртатăп,
Кĕрейместĕп-ха тăна.
Çав-çавах чунтан калатăп:
— Юрататăп эп сана.

## ЯВАПЛĂХ

*И. Я. Яковлева*

Ķашни япалан хăйĕн вырăнĕ пур,—
Çак пурнăç саккунĕ иртмест ĕмĕрне.
Асап ăсанать, арканать пур хĕн-хур,
Истори пурне те лартать вырăнне.

Пĕрне, авă, лартнă гранит чул çине,
Тепри тăпра евĕр тĕпреннĕ тĕпрен.
Çĕн пурнăç енне çул уçан çынсене
Никам паянтан тек сураймĕ питрен.

Тĕтре сирĕлет, çĕкленет çут хĕвел,
Шевлийĕ вылять кашни яш чунĕнче.
Çĕнни çĕнтерме çитерейĕ мехел,—
Ķашни халь явaплă кунçул умĕнче.

## ЯЛАН ПИРЁНПЕ ЮНАШАР

*Микулай Шелепие*

«Çён пурнăç хёвелĕ çĕкленĕ,
Çухалĕç хура пĕлĕтсем...»—
Эс шаннă çакна, эс ĕненнĕ
Хавас çĕнтерÿ килессе.

Кĕтни санăн çитрĕ. Ак кунĕ.
Хывар çĕнĕ юрă, юрлар.
Вилмен вăл чăвашăн акынĕ,
Ялан пирĕнпе юнашар.

Сана çичĕ хут йывăр пулнă
Утма сакăлталлă çулпа.
Эс куççăр пулсассăн та курнă,
Эс курнă йăлтах чунупа.

Чĕрÿ санăн канăç кĕтмерĕ,
Паян та хĕрÿ, шĕл-кăвар.
Вилмен вăл чăвашăн Гомерĕ,
Ялан пирĕнпе юнашар.

Сана чыс туса пуç таять халь
Кашни Шелепи шерепи.
Чĕрех-ха поэт, пурăнать-ха —
Юрри-сăввинче ун шăпи.

Ав кур, çĕнелсе чечекленчĕ
Эс савнă шап-шур Шупашкар.
Вилмен Чăваш халăх поэчĕ,
Ялан пирĕнпе юнашар.

## ТАРТИК ТАВРАШĔ

*Аттене,*
*Смолин Семен Семеновича*

Ҫăра ҫиллĕ-и, йăваш-и,
Пур-и вĕҫкĕнлĕх пăртак —
Ик сăмах: «Тартик таврашĕ»—
Ҫалĕ йăх ҫинчен йăлтах.

Асатте Тартик Ҫеменĕ,
Пит юратнă шӳтлеме:
— Тэмекэ тортик-мĕ?*— тенĕ,
Ячĕ юлнă ял ҫине.

Ҫавăнтан вара пуҫланă
Шурсухал ҫĕн йăх ятне.
Тартиксем тесен ăнланнă
Пурте несĕл сăпатне.

Хĕвелпе пĕрле пикеннĕ
Ĕҫлеме хастар ҫынсем.
Тимĕрҫĕ лаҫҫи кĕрленĕ —
Тар юхтарнă тартиксем.

Пуртăпа та пит пултарнă
Ҫурт лартма, пура касма...
Пур ĕҫре те хĕм кăларнă,
Пăрахман йăха тăсма.

Ҫĕслепе те пулнă туслă,
Сĕрме купăспа — тăван.
Вăйăра хуткупăс тăснă...
Сăвăҫсем вара пулман.

---

* Тэмекэ тортик-мĕ? *(тут.)*— чĕлĕм туртăпăр-и?

Çавăнпа эп кĕрес терĕм
Çут поэзи лаççине,
Асаннеçĕм пехиллерĕ,
Парнелерĕ уççине.

Аллăмра шух кăранташĕ,
Хут çине тумлатăр тар.
Эпĕ те Тартик тавраше,
Пулма кирлĕ пархатар.

* * *

*Н. И. Ашмарина*

Чăваш-и вăл е чăваш мар-и,
Нумай ĕçленĕ-и, сахал-и?
Пурне те паллă халь — Ашмарин
Чăваш сăмахĕн шурсухалĕ.

Сăмахсене шитпе виçеймĕн,
Қалаймăн: пăт туртать е — тонна.
Қунта йăлт урăхла виçе-мĕн:
Пĕр кĕнеке — вунçичĕ томлă.

Қашни сăмах, сăмах кăшкарĕ
Ун сывлăхне самай кăшларĕ.
Чăваш-и вăл е чăваш мар-и,—
Чăвашшăн тăрăшрĕ Ашмарин.

## МАН АСАТТЕ

Ман асатте кӗслеҫӗ пулнӑ,
Аста каланӑ, тупата.
Кӗввипеле ташланӑ, кулнӑ,
Чӑтман, тет, ҫӗнӗ ҫӑпата.

Ман асатте кӗслеҫӗ пулнӑ,
Ывӑлӗсем — купӑсҫӑсем.
Кӗввисемпе ташланӑ, кулнӑ,
Чӑтман, тет, ҫӗнӗ пушмаксем.

Ман асатте кӗслеҫӗ пулнӑ,
Мӗнрен кая мӑнукӗсем?
Пичӗсенче хӗвеллӗ кулӑ,
Чӑтайӗҫ-ши ҫӗн туфлисем?

* * *

Ан кулян, хуняма, ан кулян,
Кӗрӗвӳ чухӑн мар сан, пуян.
Халлӗхе укҫи ҫук кӗсйинче,
Ун пуянлӑхӗ — ҫутӑ тӗнче,

Савнӑ арӑмӗ, шух ачисем,
Хут ҫине ҫырӑнман сӑввисем...
Тем тесен те, ҫакна эс пӗлсем:
Хаклӑрах нухратран та вӗсем.

Кирлӗ мар кулянма кӑлӑхах:
Кӗрӗвӳ чӑнахах — чӑн ахах.
Анчах пултӑр хутра ҫак тупра,
Укҫа евӗр ӑна ан упра.

## ШĂНЧАС ÇĂЛКУÇĔ

*В. Станьяла*

Ялкăшать Шăнчас çăлкуçĕ —
Шăнкăр-шăнкăр — хĕл те çу.
Шăрăхра чуна вăл уçĕ.
Ăшă парĕ сивĕ чух.

Қам кăна çăлран ĕçмен-тĕр,
Қиленсе те ахлатса.
Қамăн чунĕ ан çӳçентĕр —
Шывĕ сывлăм пек таса.

Хĕл ларсан, кунта хаваслăн
Хапăлланă çут пăра.
Çу çитсен вара алхаснă
Шарлакан валашкара.

Пит нумай пире вăл пачĕ:
Уçă сасă, çивĕч куç...
Хавшаман-ха вăй-хăвачĕ,
Палкасах тăрать çăлкуç.

Ун енне тăсатăп алă,
Шывне мар, асам ăсам.
Савнă халăх савăнмалăх
Сăвă халь мана парсам.

## КĔЛПИНЕС *

Пултаруллă Ҫĕлпинес —
Ҫам кăна ăна пĕлмест.
Ҫывхарса пырать ҫĕре,
Хăй чупса кăна ҫӳрет.
Ир-ирех тăрса, ялан
Ҫаврăнса тухать яла.
Ҫамăн вутă татмалла —
Ҫул тытать ҫавăнталла.
Пускилти ватăсене
Йыхăрать вăл нимене.
Хăвармасть ҫитмен кĕтес,
Пур килте те: «Ман килес!»
Тытăнать хăй сăнама:
Ҫам салхуллă, кам сыв мар...
Пуҫĕнче пĕр шухăш ун —
Ҫирлĕ мар-ши пулăшу?
Хисеплет ялйыш ăна.
Ҫашни ҫыншăн вăл — хăна,
Ҫавăнпа пуль яланах
Килсерен ҫӳрет сăмах:
— Ватăлмасăр пурăн эс,
Пултаруллă Ҫĕлпинес!

* Ҫ ĕ л п и н е с — тĕне кĕмен чăваш хĕрарăмĕн ячĕ.

# САМАНТ

*Х. Ю.*

Нумай çынра художник тĕлĕрет-мĕн,
Нумай çынра çыравçă çывăрать.
Сасартăках самант килет кĕтретĕн —
Чуну кăвак хуппи пек уçăлать.

Пĕри хăш чух кĕтет ăна çур ĕмĕр,
Тепри мĕн пурнăç тăршшĕпех кĕтет.
Ҫуса çапать пулсассăн та каç сĕмĕ,
Ҫинет килет теветлĕ çут тивлет.

Ун чух вара çырса хума çеç ĕлкĕр
Шух шухăшна шур хут е пир çине.
Чуну ун чух, чăнах,— асамлă тĕкĕр,
Ҫашни курать епле вăл çуннине.

Часрах килсен саманчĕ пит аванччĕ
Тесе эс  ăнтăлаттăн çӳлелле.
Пĕррехинче сан «çунату» аманчĕ:
Вĕçме çуралнă çыннăн — вĕçмелле.

Ҫук, усăнмарĕ икĕ ылтăн алă,
Ҫĕкленчĕ тепĕр хут çĕн туртăмпа.
Ахальтен мар поэт çапла каланă:
«Талант тени вăл тан пекех тапать».

## ÇАВРĂМ

### I

*Аннеме,*
*Смолина Неонила Алексеевнăна*

Упăте пекех упаленетĕп,
Асăм çук-ха ик сăмах çыхма.
Çав-çавах çавна аван пĕлетĕп:
Килнĕ эп, çуралнă пурăнма.

Çакă çутă тĕнчене курмашкăн
Кармашатăп чӳрече енне.
Йăл кулса çĕклет мана ачашшăн
Кăкăрĕ çумне тăван анне.

Эх, анне чĕри,— черченкĕ чăмăр,—
Мĕн кăна тӳсмен ĕмĕрĕнче.
Урамра сив юр çăвать е çумăр —
Ашă аннесен чĕрисенче.

Эсĕ пур, ăна-кăна сисместĕн,
Темшĕн-çке пăхатăн макăрма.
Пĕтĕмпех пĕчĕкренех пĕлес-тĕк,
Кăсăкĕ те пулмĕ пурăнма.

### II

Пурнăç, пурнăç... Улшăнать вăл хăвăрт.
Уйрăлтăм пепкелĕх кипкипе.
Атте авнă сăпкара халь тăвăр.
Пăхăр: эп чупатăп сиккипе.

Çаруран чупатăп эп çул тăрăх,
Хыçалта тусать вĕри тусан.
Мĕн тума пултарăн-ха эс урăх,
Хĕпĕртӳллĕ саккăра пуссан?

Вăлтапа пулла кайма пултарăн,
Кăмпана уттарăн ир-ирех.
Таврара çырма-çатра пит тарăн,
Йăмрасем лартсассăн тем пекех!

Шух ачалăх, савнăçлă ачалăх,—
Вăрман çийĕн янă çĕмренех,—
Тăрса юлчĕ ĕмĕр асăнмалăх
Асанне юмахĕ еверлех.

III

Асанне юмахĕ... Астăватăп,
Хĕллехи тăманлă каçсенче
Çавăрса илеттĕмĕр тăваттăн,
Асанне, сана лапка çинче.

Мăрьере улатчĕ урнă çилĕ,
Ыйхă çулăхатчĕ кăлăхах.
Ку чухне епле çывăрас килĕ?
Тăсăлатчĕ майĕпен юмах:

«Пуранна,— тет, тахçанах пĕр улăп,
Унăн ячĕ пулнă, тет, Юман.
Пулнă, тет, вăл паттăр та хăюллă,
Халăха сыхланă çич ютран...»

Асăмран тухма пĕлмен çав улăп,
Чĕрере упранă юмаха:
«Эпĕ те ӳссессĕн ун пек пулăп.
Памăп хур курмашкăн халăха».

## IV

Халăхăм... Хăватлă, харсăр халăх,
Ăçтарах пуçланнă кунçулу?
Шухă хун юнне хутăштармалăх
Вăхăт пулнă. Вăрăм сан çулу.

Атăлçи пăлхарĕ эсĕ мар-и?
Батбай хан пулман-и çулпуçу?
Çунтармарĕ-и монгол-тутарĕ?
Пит хаяр пулман-и тытăçу?..

Халăхăм... Юратнă паттăр халăх,
Умăнта таятăп пуçăма.
Вăхăт пулнă санăн хур курмалăх.
Вăхăт çитрĕ çĕн çерем уçма!

Вăхăт çитрĕ. Эс текех йăваш-и?
Сарлака-и ĕмĕрсен сакки?
Уçлăхра, ав, аптраман тавраш!—
Çакă мар-и Çĕнĕ Кун аки?!!

## V

Çĕнĕ кун. Мĕскер-ши эс кăтартăн
Мал енне утан этемлĕхе?
Е нейтронпала хăватлă атом
Хуплĕç хĕвеле ĕмĕрлĕхе?

Е çич тĕслĕ асамат кĕперĕ
Анмĕ анлă Атăл хĕррине?
Е вут-çулăм пĕтĕмпех пĕтерĕ
Халăх юррине те тĕррине?..

Вăрçăшăн каллех вăрă-хурахĕ,
ЭТЕМЕ пăхать вăл ал хума.
Асăмрах-ха асӑнне юмахĕ.
Памăп хур курма халăхăма!

Нихăçан та сӳнмĕ çут хĕвелĕм,
Ун ăшшийĕ тармĕ çĕр çинчен.
Çын чĕри ялан ĕçре хĕмленĕ,
Вĕççĕр пулĕ ĕмĕрĕ тĕнчен.

## VI

Вĕççĕр пулĕ кунĕ шух ачашăн,—
Савнăç çитрĕ мар-и Çĕр çине?!—
Йăл кулса çĕклет ăна ачашшăн
Амăшĕ хăй кăкăрĕ çумне.

Савнăçлăн кулса хавхаланать вăл,
Ман пепкеçĕм, манăн пĕчĕкскер.
Уншăн халь пур халăх та явaплă,
Вăл паян пуриншĕн те еткер.

Тен, вăл малашне çĕн уçлăх усĕ
Илĕртӳллĕ çут инçет енне.
Асĕнче ун юлĕ ял çăлкуçĕ,
Чĕринче ун юлĕ Çĕр-анне.

Юлĕ юмахри хăватлă паттăр.
Çăлтăр евĕр эп çунса пĕтем,—
Çынлăха нихçан та ан çухаттăр,
Хăй ятне ан ятăрччĕ этем.

## ЧУН ĂШШИ

### I

*Юратнă асаннене —*
*Смолина Христинăна —*
*асăнса*

Чунăмра вутчуль,
Ķуçăмра куççуль,
Манаймастăп эп иртнине.
Умăмра мăн çул,
Тăсăлать кунçул,
Асăмран тухмасть асанне.

### II

Хаваслăн та шавлăн чупатпăр тăваттăн,
Пухатпăр-тусатпăр кил-çурт тусанне.
Темле тарăхсан та, мĕнех тăваятăн —
Пире пурпĕрех тытаймасть асанне.

Эпир çенĕкре куян пек чупкалатпăр,
Упа-утаман пек пуçлатпăр утма,
Линейка-хĕçпе минтере шăтаратпăр,
Йăлтах ĕлкĕретпĕр хуçма та ватма.

Атте те, анне те ĕçе тухса кайнă,
Ķилеççĕ вĕсем ывăнса каç енне.
Ķилте вара ĕçĕ ытла та нумай-мĕн.
Епле пĕр-пĕччен ĕлкĕрет асанне?

Анчах ачасем ват çынна-и ăнланĕç,
Шух кăмăл вылявĕ ăсран вăйлăрах.
Яшка, хура çăкăр — самантлăх йăпанăç,
Вĕсемшĕн халь вăйă — темрен хаклăрах.

### III

Çӳçĕнче шур юр та пур ун,
Пĕркеленчĕк — питĕнче:
Хура-шур чылай вăл курнă
Хăйĕн пурăнăçĕнче.

Пĕчĕкскер, кăштах курпунлă,
Ăшă, ырă куçлăскер.
Ун шăпи тумхахлă пулнă,
Йывăр килнĕ çав хатер.

Ун кунçулĕ пит те хурлă.
Епле чăтнă каçсенче?—
Ик  ача çеç тăрса юлнă
Тăхăр савнă пепкинчен.

Пĕртен-пĕр йăпанăç унăн
Пулнă шух мăнукĕсем...
«Эй, ыр пурнăç, тек ан улшăн,
Хĕрхенсем, хута кĕрсем».

### IV

Туçи сăрчĕ ытла та çӳллĕ.
Çил ачи юр сапать питрен,
Тăсăлать хитрен йĕлтĕр çулĕ,
Хĕл Мучи те тарать пиртен.

Кĕрт ăшне вирлĕнех чăматпăр.
Қаç енне-нӳрленет çипуç.
Шакмак пек шаклатать çăматă:
— Алăка, асаннеçĕм, уç!

Вăл пĕлет: пирĕн хырăм выçнă,
Яшкине антарать часах.
Апатне шăпăрт çинĕ хыççăн
Пуçланать хай сăмах-юмах.

Улăп-паттăр ăçта çуралнă?
Пурăнать-ши вăл? Хăш ялта?
Унăн çĕр ача е çĕр аллă?..
Асанне хуравлать йăлтах.

Çăлтăр евĕр куççем сӳнеççĕ...
Тĕлленет çуллахи ĕшне...
Çывăрмасть çавах асаннеçĕм,
Хураллать улăпсен йышне.

V

Пур çĕрте: урамра та, килте те
Вĕрентетчĕ ялан ыррине.
Час-часах халалне асилетĕп —
Емĕте упрама сĕннине.

Ун вĕрентĕвĕ кăлăх пулмарĕ,
Сăвăсем эп пуçларăм çырма.
(Емĕте упрасси — çака мар-и)
Халалларăм ăна сăввăма.

Ватă çын куççульне пытармарĕ,
Вăл пĕр тенкĕ тыттарчĕ мана.
Çакă пулчĕ пулас гонорарĕ,
Манас çук нихăçан та ăна.

## VI

Йывăрланчĕ-çке асаннеçĕм,
Йăшрĕ сывлăхĕ кунран-кун.
Ăшшине ним юлми валеçнĕн
Сивĕнсех пычĕ ӳчĕ ун.

Анчах ырă сынсем вилмеççĕ,
Пурăнаççĕ пин çул хушши.
Ăшшине вăл пире валеçрĕ,
Пирĕнте унăн чун ăшши.

## VII

Халь эпир, паллах,
Лăпкăрах кăштах.
Кашниннех çемье, ачасем.
Татăлмасть юмах,
Вĕçленмест сăмах,
Çуралаççĕ çĕн ыйтусем.

Чунăмра вутчуль,
Куçăмра куççуль,
Манаймастăп эп иртнине.
Умăмра мăн çул,
Тăсăлать кунçул,
Асăмран тухмасть асанне.

# ТУПМАЛЛИ

## ПУРНĂÇ ТУРТĂМĔ


«Чăваш чĕлхи — эс ман чĕлхем...» . . . . . 3
«Чăвашсем, чăмăртанăр!..» . . . . . . . 4
Самана . . . . . . . . . . . . . . 5
Мамай тӳпемĕ . . . . . . . . . . . 6
«Каччă чунĕ хăш чух пархатарлă...» . . . 7
«Тиевре — ăпăр-тапăр...» . . . . . . . 8
«Телей тени мĕскер тени пулать...» . . . . . 9
«Кăвак хуппи уçăлсан...» . . . . . . . . 10
«Хĕсĕкрех иккен...» . . . . . . . . . —
Чăнлăх . . . . . . . . . . . . . 11
Тĕрлемес . . . . . . . . . . . . 13
Сăхăм сăмахĕ . . . . . . . . . . . 14
«Чечек евĕр çулсене...» . . . . . . . . 16
«Хуркайăксем, мĕн-ма эсир вĕçетĕр...» . . . . . 17
Вĕренӳре . . . . . . . . . . . . —
Тăватшар йĕркен . . . . . . . . . . 18
Йăпăлтине . . . . . . . . . . . . 19
Пĕр критике . . . . . . . . . . . —
«Эп авман-и ухă...» . . . . . . . . . —
Савăнтартăм . . . . . . . . . . . 20
«Ман асатте ĕненнĕ Сталина...» . . . . . . —
Çул юппинче . . . . . . . . . . . 21
Интернационал кĕперĕ . . . . . . . . 22
«Пурăнăç туртăмĕн...» . . . . . . . . 30
Кукамайпа калаçни . . . . . . . . . 31
«Хĕл варринче çăва пуçларĕ çумăр...» . . . . . 32
Кала-ха, мистер Джон . . . . . . . . 33
«Панеллĕ çĕнĕ çурт чӳречинчен...» . . . . . . 34
«Кĕр кунĕнче, карла-карла, кăнтăралла...» . . . 35
«Чăвашра вĕçтерет çил-тăман...» . . . . . . 36
«Эс мана, Пицунда...» . . . . . . . . 37

«Вăрахчен, чунтанах тĕлĕнсе...» . . . . . . 38
«Шурă пуçлă Кавказ...» . . . . . . . . 39
«Çӳлти хутра, библиотекăра...» . . . . . . 40

## ЮРАТУ ҪĂВАРĔ

«Çăлтăр тӳпере...» . . . . . . . . . . . 41
«Сана кĕтсе, чĕрем кӳтсе пăрланчĕ...» . . . . . 42
«Халиччен утманскер юрату çулĕпе...» . . . . . —
Кăвайт . . . . . . . . . . . . 43
Юрату . . . . . . . . . . . . 44

## ЧУН ĂШШИ

Яваплăх . . . . . . . . . . . . 45
Ялан пирĕнпе юнашар . . . . . . . . 46
Тартик тавраше . . . . . . . . . 47
«Чăваш-и вăл е чăваш мар-и...» . . . . . . 49
Ман асатте . . . . . . . . . . . 50
«Ан кулян, хунямa, ан кулян...» . . . . . —
Шăнчас çăлкуçĕ . . . . . . . . . . 51
Кĕлпинес . . . . . . . . . . . 52
Самант . . . . . . . . . . . . 53
Çаврăм . . . . . . . . . . . . 54
Чун ăшши . . . . . . . . . . . 58

*Для старшего школьного возраста*

**СМОЛИН**
**Анатолий Семенович**

**КРУГ**

Стихи

На чувашском языке

Редактор **В. П. Тимаков**
Художник **В. А. Смирнов**
Художественный редактор **М. Д. Давлятшин**
Технический редактор **Н. В. Васильева**
Корректор **Р. К. Куприянова**

**ИБ 2520**

Сдано в набор 21.03.90. Подписано к печати 25.07.91. Формат 70×90 1/32. Бумага офс. № 2 кн.-журн. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,34. Усл. кр.-отт. 2,51. Учетно-изд. л. 2,08. Тираж 2500 экз. Заказ № 1153. Изд. № 56. Цена 30 коп.

Чувашское книжное издательство.
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской ССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

30 ㄘ.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ